Чăваш Республикин 2020 çулччenхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен

# Чăннипех те пĕлтерĕшлĕ тата кирлĕ документ

***Нумаях пулмасть республикăра пуранакан кашни çыннах тÿрремĕн пырса тивекен пысăк пĕлтерĕшлĕ документ кун çути курчĕ. Сăмах кунта ЧР Патшалăх Канашĕн иртнĕ сессийĕнче йышăннă «Чăваш Республикин 2020 çулччenхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» саккун проектне пирки пырать. Кунта палăртнă тĕллевсемпе задачăсем, пĕр сăмахпа каласан, питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çавна май район хаçачĕн сотрудникĕ В. ШАПОШНИКОВ вĕсем пирки район хаçачĕн яланхи хăнине, ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне Владислав Григорьевич ДАНИЛОВА каласа пама ыйтнă.***

– Эпир, депутатсем, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн юлашки сессийĕнче пĕрремĕш вулавра «Чăваш Республикин 2020 çулччenхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» саккун проектне йышăнтăмăр. Сесси ĕçне çак саккун пуçаруçи, Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров активлă хутшăнчĕ.

Иккĕмĕш вулавпа саккун проектне йышăниччен ăна пĕтĕм халăхпа тĕплĕн тишкерсе хак пама, сĕнÿсемпе хушусем кĕртме палăртнă. Тĕрĕссипе илсен ку документ чăннипех те историллĕ пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Вăл кашнинех пырса тивет. Çавăнпа та ăна пĕтĕм халăхпа сÿтсе явни вырăнлă.

Н.В. Федоров Президент хăйĕн сăмахĕнче çавна палăртрĕ. Правительство, Президент администрацийĕ, республика Патшалăх Канашĕ саккун проектĕ тĕлĕшпе ĕçлĕ, вырăнлă сĕнÿсем кĕтеççĕ. Хальхи вăхăтра вара пур пуçаруçене те хирĕç пыракансем, халех ĕнтĕ саккун проекчĕ пурнăçланма пултараймасть тесе сăмах çапакансем те çук мар.

Эпĕ вара çапла шутлатăп. Çынна чи малтанах ăслăтăнлă шухăшлав, çирĕп тĕллев, лайăххи патне ăнтăлу, оптимизм кирлĕ. Çавна çирĕплетсех калама пулать: республика умне, пирĕн ума лартнă задачăсемпе тĕллевсене пурнăçлама чи малтанах пирĕн халăхăн ĕçченлĕхĕ, услойисем, шанни тата ĕненни, Раççей патшалăхĕн пулăшăвĕ пур. Кунпа пĕрлех хальхи вăхăтра пысăк вăй пулса тăракан «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») партин пулăшăвĕ те çук мар. Пирĕн Президент асăннă партин аслă канашĕн членĕ пулни хăй те нумайăн çинчен каласа парать. «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») вара пуш сăмах çаптаракансен, ултавçăсен партийĕ мар. Ку вăл ÿсĕм çулĕпе малалла утакансен, çĕнĕрен çĕнĕ чикĕсем çĕнсе илекенсен партийĕ. Çакна эпир курса ĕненме ĕлкĕртĕмĕр ĕнтĕ.

Саккун проекчĕпе паллашнă май эпир лайăх ăнланатпăр: унăн тĕп тĕллевĕ – республикăра пурăнакансен пурнăç условийĕсене Европа стандарчĕсемпе çывăхлатасси. Хальхи вăхăтра республикăра пурăнакансенчен 20 проценчĕн тупăшĕ пурăнма кирлĕ минимумран пĕчĕккрех. 2020 çул тĕлне вара ку хисеп Чăваш Республикипе 5 процента çити чакмалла. Кунпа пĕрлех чухăн пурăнакансене, сахал тупăш илекенсене те пурăнма кирлĕ условисемпе тивĕçтермелле: социаллă çăмăллăхсемпе, сывлăха сыхлассипе, социаллă хÿтлĕх парассипе.

Чăн та ĕнтĕ, палăртнă задачăсем питех те пысăк. Вĕсене татса пама çăмăлах пулмĕ. 2006 çулхипе танлаштарсан, пĕтĕмĕшле регион продукцине туса илессине 2,7 хут, продукци тирпейлекен предприятисен прдукци ăсатассине 2,6 хут, ял хуçалăх продукцине туса илессине 1,3 хут ÿстермелле. Республикăна инвестицисем хывасси 3,8 хут пысăкрах пулмалла. Кашни çын пуçне тивекен вăтам тупăш 4,7 хут, инфляцие шутласан чăн тупăшсем 2,2 хут пысăкланмалла.

Уйрăмах наукăпа техника потенциалĕ анлăрах аталаннă территорисене пысăкрах тимлĕх уйăрма палăртнă. Шупашкарта – машиностроени, Канашра тата Çĕмĕрлере – ятарлă автомашинăсем тăвасси, Çĕнĕ Шупашкарта – химие аталантарасси, Улатăрта – кантăк тăвас производство. Паллă ĕнтĕ, çакă пĕтĕмпех хальхи вăхăт ыйтнă чи çирĕп требованисене тивĕçтермелле.

Строительство комплексне аталантарасси вара – тĕп енсенчен пĕри. Чи малтанах пысăк хуласем çывăхĕнчи зонăсене аталантарасси çине тимлĕх уйăрма палăртнă. Ытларах кунта çăмăл конструкцисенчен пысăках мар çуртсем тăвассине малти вырăна хурĕç.

Стратегире ытти виçĕ приоритетлă наци проектне те паллă вырăн уйăрнă. Вĕсем пурте паянхи кун республикăра ăнăçлăн пурнăçа кĕрсе пыраççĕ. Çак пур наци проекчĕсен те, республикăн 2020 çулччenхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕн те тĕп тĕллевĕ çынсен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси, пурнăç пахалăхне ÿстересси, ачасем çуралассине ÿстерсе пырса, тĕрлĕрен сăлтавсене пула çынсем вилессине чакарса ĕçлеме пултаракан çынсен йышне хапартасси пулса тăрать. Çын хăйĕн хыççăн паллă йĕр хăварма, хăйĕн ачисемпе мăнукĕсем валли лайăх условисем туса парса хăварма пултартăр, вĕсем вара çитес ăрусен ырлăхĕшĕн ĕçлеме пултарччăр.

Экономикăпа социаллă аталанăвăн 2020 çулччenхи стратегийĕ пирĕн халăхшăн тата пур çынсемшĕн те питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ документ пулса тăрать. Вăл пире пĕтĕм халăх, наци ырлăхпурлăхне ÿстерессишĕн обществăн, власть структурисен, пирĕнтен кашнин таччăн тата алла-алăн тытăнса ĕçлемеллине пĕлтерет.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ пулнă май эпĕ çавна каласа хăварасшăн. «Чăваш Республикин 2020 çулччenхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн стратегийĕ çинчен» саккун проекчĕ пирки хăвăрăн шухăш-кăмăлăра пĕлтерме именсе тата ÿркенсе ан тăрăр. Шанса тăратăп: уйрăмах пĕлтерĕшлĕ шухăшсемпе сĕнÿсене пурне те çĕнĕ саккунра шута илĕç. Вĕсем вара пирĕнтен кашнинех пырса тивеççĕ.

Эрнелĕх

## Чăваш чĕлхине халалласа

Юлашки çулсенче районти библиотекăсенче чăваш чĕлхине халалласа эрнелĕх ирттересси çирĕп йăлана кĕчĕ.

Мĕнле тĕллевсемпе ĕçлеççĕха пирĕн библиотекăсем çак тапхăрта. Паллах, чи пĕрремĕшĕ вăл вулакансене тăван чĕлхене тата чăваш кĕнекине хисеплеме, юратма вĕрентесси, общество аталанăвĕнче тăван чĕлхен пĕлтерĕшне тĕрĕс хаклама пулăшасси, чăваш кĕнекине халăх хушшинче анлăрах сарасси.

«Тайма пуç сана, чăваш чĕлхи!» Çак ятпа ирттерме палăртнă эрнелĕхе кăçал пирĕн районти библиотекăсенче. Çак тапхăрта вĕсенче тĕрлĕ мероприятисем ирттерессине палăртса хунă.

«Тăван чĕлхем – таса хĕлхем» ятпа иртекен кĕнеке выставки, «Ача-пăчана чăваш кĕнекине тивĕçтерес ĕçри çĕнĕлĕхсем» сĕнÿсем, «Тавах чăваш улăпне» литературăпа музыка композицийĕ, Александра Лазарева çуралнăранпа 90 çул çитнине халалланă «Ачалăх – асамлă тĕнче» литература каçĕ, чăваш чĕлхипе литературин эрудичĕсен «Тăван сăмах тĕнчинче» конкурсĕ – çаксем вĕсем палăртнă ĕçсен пĕр пайĕ кăна.

Чăваш чĕлхине тата литературине халалланă мероприятисене ялти библиотекăсем кашни çулах шкулсемпе тата шкул библиотекисемпе тачă çыхăнса ирттереççĕ. Çакă вăл туса ирттерекен ĕçсен пахалăхне ÿстерме пулăшать. Кăçал та эрнелĕхе çак майпах пурнăçлама тăрăшмалла.

Эрнелĕхĕн тĕллевĕсене тивĕçлĕ шайра пурнăçлама район библиотекисене юлашки тапхăрта килекен йышлă чăваш кĕнекисем те пысăк витĕм кÿрĕç. Вĕсенчен хăшĕсене асăнса хăварар-ха: Гордеев Д. – «Пăсташ»; Алендей В. – «Вĕлле хурчĕ ылтăн хурт»; Николаев В. – «История предков чувашей в 30 в. до н. э. – 8 в. н. э.»; Ефимов Г. – «Шухăш пайăркисем»; Юхма М. – «Сан яту ман юрăра»; Элби В. – «Пепке çуралсан»; «Чăваш чĕлхе тĕпчевçисем»; Краснов Г. – «Çĕрле лартнă улмуççи»; Петровский И. – «Тăм тивнĕ чун»; Жачева Е. – «Чувашские вышивки»; Çеçпĕл Мишши – «Чăн чĕрĕлнĕ». Çак тата ытти кĕнекесем чăваш чĕлхипе литературин эрнелĕхне халалласа ирттерекен мероприятисенче хăйсен вырăнне тупĕç.

Чăваш халăхĕ хăйĕн нумай ĕмĕрлĕ историйĕнче тĕрлĕ йывăрлăхсем витĕр тухса чĕлхене тата культурăн хăйне евĕрлĕхне упраса хăварма пултарнă. И.Я. Яковлев чунне парса ĕçленине пула наци ăс-хакăлĕ татах та пуянланнă. Вăл çуралнă кун вара чăваш чĕлхин уявĕ пулса тăчĕ.

**Т. ИВАНОВА,**
**Муркаш библиотекин библиотекарĕ.**

Шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсенче

## Ачаранах пĕлÿ тĕнчине ăнтăлаççĕ

Ачасем мĕн çуралнăран тытăнсах пĕлме, курма, тĕпчеме тăрăшни пурне те паллă. Учейнăсем палăртнă тăрăх, ăс-тăн аталанăвĕн мелĕ ачара 50-60 процент шутланать. Çавăнпа та пурнăç условийĕсем, епле воспитани пани, ашшĕ-амăшĕн хутшăнăвĕ, педагогсен тăрăшулăхĕ çут çанталăк пана мелсене аталантармалли факторсем пулса тăраççĕ.

Хамăр ача садĕнче эпир ку мелсемпе туллин усă курма тăрăшатпăр. Ачан тĕпчес, пĕлес, ытларах хăйĕн вăйĕпе хуравсем тупас туртăмне аталантарма çине тăратпăр, илнĕ пĕлÿпе практикăлла задачăсене пурнăçланă çĕрте усă курма пултартăр тетпĕр.

йĕркинчех. Вĕсене хамăр туса хатĕрлеме тăрăшатпăр. «Тĕнче тавра» технологи хатĕрлеме тытăнтăмăр. Унăн тĕллевĕ – тĕнчене тĕпчес туртăма çуратасси, унăн хăйне евĕрлĕхĕпе илемне кăтартасси. Ачасене ытти континентсемпе паллаштарнă май вĕсен тавра курăмĕ ÿснипе пĕрлех Тăван çĕршыв илемне те кураççĕ, ăна ытларах юратма тытăнаççĕ. Ачасем тĕрлĕ континентсем тĕлĕшпе илнĕ информацие пĕр-пĕрине танлаштарма пултараççĕ. Эпир кун пек «экскурсисене» Африка, Австрали тăрăх ирттертĕмĕр те ĕнтĕ. Черетре – Америка, Арктика тата Антарктида. Ку ĕçре вара хальхи çĕнĕ информацие коммуникативлă

Чи малтанах предмет аталанăвĕн тытăмне аталантарас терĕмĕр. Çавна май ушкăнсенче ятарлă кĕтессем йĕркелерĕмĕр. Кунта ачасем хăйсен тĕллĕн ĕçлессипе хăйсен интересĕсене тивĕçтерме пултараççĕ. Кусем вĕсем «Пултарха», «Пĕл-ха», «Ÿкер-ха», «Вула-ха» кĕтес, «Хĕвел системи» кĕтес, ăслăлăхпа экспериментсен кĕтесĕ.

Ăс-тăна аталантармалли тĕп мел вара вăл вĕрентÿ пулса тăрать. Ăна эпир вăйăсем урлă йĕркелесе пыратпăр. Занятисенче ачасене юмахсенчи тĕлĕрен персонажсем вĕрентеççĕ.

Экскурси мелĕпе йĕркеленĕ занятисене ачасем уйрăмах кăмăллаççĕ. Вĕсенче эпир тĕрлĕ професси çыннисемпе тĕл пулусем йĕркелетпĕр, вĕсемпе калаçатпăр, вĕсен ĕç уйрăмлăхĕсем пирки пĕлетпĕр, тавралăха экскурсисем йĕркелетпĕр.

Инновациллĕ вĕрентÿ технологийĕсемпе усă курасси те кун хатĕрсемпе (телевизор, DVD-плеер, компьютер) усă курмасăр май çук.

Çапла ĕçлесе пынин усси çук мар тесе шутлатпăр. Кăçалхи мартăн 13-мĕшĕнче шкул çулне çитмен ача-пăча учрежденийĕсене çÿрекенсен хушшинче районта интеллектуаллă марафон иртрĕ. Ăна зонăсем тăрăх йĕркеленĕ.

«Путене» ача садĕнче йĕркеленĕ интеллектуаллă вăйăсене 3 команда хутшăнчĕ. Кусем вĕсем «Путене», «Золушка» тата пирĕн ача сачĕсен командисем. Унта хутшăнакансем чăннипех те хăйсен пултарулăхĕпе ăс-тăн шайне кăтартса пачĕç. Пирĕн ача сачĕн команди вара, ытларах очко пухса, «Чи ăслă-тăнлисем» номинацире çĕнтерÿçĕ пулса тăма пултарчĕ.

**О. ПРОКОПЬЕВА,**
**«Солнышко» ача сачĕн воспитателĕ.**

**Сăн ÿкерчĕкре: интеллектуаллă вăйăсем вăхăтĕнче.**

Шкулсенчен хыпарлаççĕ

## Атапайсем – иккĕмĕшсем

Çуркуннехи каникул кунĕсенче районти учительсен спартакиади иртрĕ. Ака уйăхĕн 4-мĕшĕнче пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкул коллективĕсем хушшинче хĕрÿ ăмăрту пулчĕ. Вĕрентекенсем шашкăлла, шахматла, теннисла тата волейболла выляссипе ăмăртрĕç. Пурĕ кунта 13 шкул команди хутшăнчĕ.

Пĕтĕмĕшле пĕтĕмлетÿсем хыççăн çакă паллă пулчĕ. 1-мĕш вырăна Вăрманкасси шкул коллективĕ тухрĕ. 2-мĕш вырăнта – Атапайсем, 3-мĕшĕнче – Шетмĕпуссем.

Атапайсем маттурри куç кĕретех пулчĕ. Мĕншĕн тесен нумай ăмăртура вĕсем малти вырăнсене илме пултарчĕç.

Шкул командине ертсе пыраканĕ Ю.И. Ковалев пулчĕ. Вăл командăна çĕнтерÿсем тума хавхалантарса пычĕ. Çавăнпах ĕнтĕ пирĕн шкул команди малти вырăнсенчен пĕрне йышăнма пултарчĕ. Чăн та маттур иккен пирĕн шкулти вĕрентекенсем!

**Е. КОЛБАСОВА,**
**Атапай шкулĕнче 7-мĕш класра вĕренекен.**

## Кăсăклă мероприятисем иртрĕç

Мартăн 26-мĕшĕнчен тытăнса апрелĕн 1-мĕшĕччен Кашмашри ялти библиотекăра Ача-пăча кĕнекин эрни иртрĕ. Çав тапхăрта эпир библиотекăран тухма та пĕлмерĕмĕр. Библиотека ертÿçи О.А. Семенова пирĕнпе куллен тĕрлĕ конкурссем, викторинăсем ирттерчĕ. Чылай çĕнĕ кĕнекесемпе паллашрăмăр.

Мартăн 26-мĕшĕнче кайăксем пирки пĕлессипе КВН иртрĕ, мартăн 27-мĕшĕнче вара «Чăваш çыравçисем – ачасен тусĕсем» конкурс пулчĕ. Кунпа пĕрлех «Литературные чародеи», «Книга и кино» конкурссем те, «Сказочный эрудит» турнир та, ытти тĕрлĕ мероприятисем те ачасен асĕнче нумайлăха юлĕç.

**Т. АЛЕКСАНДРОВА,**
**Кашмаш шкулĕнче 4-мĕш класра вĕренекен.**
**Сăн ÿкерчĕкре: эпир кĕнекепе яланах туслă.**

## Библиотекăра питĕ интереслĕ

Кашни çулах мартăн юлашки эрнинче Мăн Сĕнтĕрте тĕслĕх библиотекăра ача-пăча кунĕсем иртеççĕ. Вĕсене ача-пăча хайлавĕсене тата ача-пăча çыравçисемпе поэчĕсене халалаççĕ.

Кăçал та çак йăларан юлас мар тесе мартăн 26-31-мĕшĕсенче библиотекăра ача-пăча кĕнекисен эрни иртрĕ. Кашни кунах кунта Татьяна Николаевна, Светлана Георгиевна тата Татьяна Аверкиевна, ача-пăча хайлавĕсен çыравçисене халалласа, конкурссем, викторинăсем, вăйăсем тата мультимедиллă сеанссем ирттерчĕç. Мероприятисене хутшăнакансен çакна пĕлмелле: çут çанталăк, камсем вăрманта тата уй-хирте пурăнаççĕ, мĕнле чĕр чунсене Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ. Çавăн пекех ачасен ваттисен сăмахĕсене, тупмалли юмахсемпе сăвăсене тата ют çĕршыври литературăна ăнкармалла.

Ачасен юратнă писателĕ Корней Иванович Чуковский çуралнăранпа 125 çул тултарнă ятпа вулавçăсен конкурсĕ пулчĕ. Вĕренекенсем унăн сăввисене хапăл тусах пăхмасăр каларĕç. Çавăн пекех шкулта та Корней Чуковский произведенийĕсемпе ÿкерчĕксен конкурсĕ иртрĕ. Хитре те илемлĕ ÿкерчĕксене шкулта пурне те курăнмалла вырăна çакнă.

Библиотека К. Чуковский юбилейне "Иккĕрен пуçласа пиллĕкчен" электронлă презентаци хатĕрлерĕ. Вăл çыравçăн пултарулăхĕпе тата унăн хайлавĕсемпе паллаштарать.

Çакăн евĕр конкурссем ирттерни ачасемшĕн усăллă. Мĕншĕн тесен вĕсем хăйсен пĕлÿпе эрудицине, ăс-хакăлне тата часах тавçăрса илме пултарнине кăтартма пултараççĕ.

**Любовь АЛАТОВА, Мăн Сĕнтĕр шкулĕн вĕренекенĕ.**

## Асра юлнă кун

Нумаях пулмасть эпир Шупашкар хулине кайса килтĕмĕр. Чи малтанах "Лакрей вăрманне" çул тытрăмăр. Унти тĕрлĕ карусельсемпе ярăнтăмăр. Уйрăмах "Круговой обзор" ятлă карусельпе ярăнма килĕшрĕ, мĕншĕн тесен унтан пĕтĕм Шупашкар хулине курма пулать.

Кайран Атăл хĕррине кайрăмăр. Унта питĕ илемлĕ! Карусельсем, пысăк кĕперсем, çÿллĕ чиркÿсем т. ыт. те. Çакăнта вырнаçнă "Чăваш наци музейне" кĕрсе курма шутларăмăр. Кунта Питĕр хулинчен килнĕ выставкăна кĕрсе куртăмăр. Выставкăри кĕлеткесене пĕтĕмпех ăвăсран тунă. Кунта эпир Ван Бетховена, А.П. Чехова, А.А. Блока, И.К. Айвазовские, Наталья Гончаровна, А.С. Пушкина т. ыт. паллă çынсене чĕрĕ пек курма пултартăмăр. Çавăн пекех куçакан динозаврсене куртăмăр. Çак чĕр чунсем питĕ пысăк, темле хăраса каймалла сасăсем кăлараççĕ, çăварĕсене уçаççĕ, хупаççĕ, пуçĕсене унталла-кунталла пăраççĕ. Кунта динозаврсемпе, паллă çынсемпе асăннăлăх сăн ÿкерчĕксем ÿкерĕнтĕмĕр. Музейра пулнă хыççăн эпир К.В. Иванов ячĕллĕ театра кайрăмăр. Унта "Юратсан юрлас килет" спектакль куртăмăр. Спектакль пурне те кăмăла кайрĕ.

Шупашкара илсе кайнăшăн эпир чи малтанах хамăр шкул директорне Г.П. Ершована, учительсене Э.А. Васильева, А.М. Данилова, А.Ю. Албутова, çавăн пекех уйрăммăн "Восток" хуçалăх ертÿçине Михаил Николаевич Шишокина автобус уйăрса панăшăн тата автбус шоферне питĕ пысăк тав сăмахĕ калаçшăн.

**Алина МАЙОРОВА.**
**Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан тĕп шкул.**